Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

55 (7480) № ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи июлĕн (утă) 7-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Июлĕн 7-мĕшĕнче – Кооперативсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ

**ХИСЕПЛĔ ПАЙЩИКСЕМ, ПОТРЕБИТЕЛЬСЕН КООПЕРАЦИЙĔН ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире Кооперативсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Потребительсен кооперацийĕ ялăн малалла ăнăçлă аталанса пымалли тĕп инструменчĕ пулса тăрать. «Агропромышленность комплексне аталантарасси» приоритетлă наци проектне пурнăçа кĕртсе пынă май ял хуçалăх производствин эффективлăхне ӳстерме те çул-йĕр ытларах уçăлать.

Пирĕн патра халăхра çапла калаççĕ: «Алла-аллăн ĕç ӳсĕнет». Пĕрлехи вăй-халпа, кооперативсем йĕркелесе ял хуçалăх продукцине тирпейлессипе, ăна вырнаçтарассипе, хресченсене производство хатĕрĕсемпе тивĕçтерессипе, кредитсем парса пулăшассипе тата страхлассипе актуаллă чылай ыйтусене ăнăçлă татса пама пулать. Эпир палăртнă задачăна пурнăçлани – кашни ял тăрăхĕнче пĕр ял хуçалăх потребительсен кооперативĕнчен кая мар йĕркелени – ял çыннисен пурнăç шайне лайăхлатма, хуласенче пурăнакансене экологи тĕлĕшĕнчен таса ял хуçалăх продукцийĕпе тивĕçтерме май парĕ.

Республикăри чылай çул каялла йĕркеленĕ кооператив – Чăвашпотребсоюз – çултан çул Раççейри потребительсен кооперативĕсем хушшинче малти ретре. Апла пулсан Чăваш Республикинче кооператив юхăмĕ Раççей потребительсен кооперативĕсен картти çинче тивĕçлĕ вырăн йышăнасса шанма пулать.

Сире тăван республика аталанăвĕшĕн тăвакан пархатарлă ĕçшĕн тав тăватăп, пурсăра та çирĕп сывлăх, оптимизм, пуçăруллă ĕмĕтĕрсене пурнăça кĕртме энерги, ăнăçупа телей сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ**
**Н. ФЕДОРОВ.**

## Июлĕн 8-мĕшĕнче – Раççей почтин кунĕ

**ПОЧТĂН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире професси уявĕпе – Раççей почтин кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Почтальонсем, çулталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те пирĕн пата хаçатсемпе, журналсемпе, çырусемпе тата открыткăсемпе васкаканскерсем, – ырă хыпарçăсемпе пулăшуçăсем. Çакăн пек çынсем пулса тăратăр эсир пирĕншĕн, çăмăл мар тата хисеплĕ професси представителĕсем.

Пысăк шайри технологи ĕмĕрĕ хăвăрт аталанать. Хальхи почта çыхăнăвĕ вăл – тĕрлĕ услугăсемпе тивĕçтерни, автоматизациленĕ майсен комплексĕ, Интернет. Куллен тенĕ пекех клиентсен ыйтăвĕсене тивĕçтермелли çĕнĕ майсем ĕçе кĕреççĕ, пулăшусен пахалăхĕпе шучĕ ӳсет. Хальхи вăхăтра «Киберденьги», «Киберпресса», «Киберпочта» проектсем пысăк утăмсем тăваççĕ.

Вăхăт иртет, почта çыхăнăвĕн майĕсем те çĕнелсе улшăнаççĕ. Апла пулин те почта службин ĕçченĕсен ĕçĕ-хĕлĕ, пĕлĕвĕ тата опычĕ обществăра пысăк хисепре. Сирĕн харпăр хăйĕн тата ĕçри пахалăх енĕсем – хăвăр ĕçе чун хушнипе туса пыни, профессионализм шайĕ, ĕçе юратни, ответлăх тата ыттисене пулăшма тăрăшни – республикăра почта çыхăнăвне аталантарма пысăк тӳпе пулса тăраççĕ.

Сире тата сирĕн çывăх çынсене çирĕп сывлăх, ăнăçусем, телей те юрату сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ**
**Н. ФЕДОРОВ.**

---

Кооперативсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ ячĕпе тата Раççей почтин кунĕ ячĕпе çавăн пекех РФ Патшалăх Думин депутачĕ, «Единая Россия» фракци членĕ **Павел СЕМЕНОВ** та саламлать.

## «Сывлăх» наци проекчĕ

# Патшалăх Думин депутачĕсем тăрăшнипе

**Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕсем, «Единая Россия» фракци членĕсем К.И. Косачевпа П.В. Семенов çине тăнипе Чăваш Республикине çак кунсенче 148 миллион тенкĕ хушма укçа уйăрса панă.**

Вăл шутран 60 миллион тенкине Шупашкарти сиплесе çитермелли центрăн иккĕмĕш ярăмне тума, 38 миллион тенкине Улатăр районĕнчи Чуварлейри ачасен туберкулезран сипленмелли санаторийĕн иккĕмĕш ярăмне тума, 35 миллион тенкине чикĕллĕ пултараслăхлă ачасен республикăри реабилитаци центрне тума уйăрма пăхнă.

## Ĕçре пултаруллисем

# 15 çул йĕрке хуралĕнче



*Лира Станиславовна Рузмикина юстици майорĕ шалти ĕçсен пайĕнче 1992 çулта дознани пайĕнче ĕçлеме пуçланă. Халĕ вара следстви уйрăмĕн аслă следователĕ пулса тăрăшать. Унăн ĕçри çитĕнĕвне Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министерствинчен панă Хисеп грамоти те çирĕплетет.*

***Сăн ӳкерчĕкре: Л.С. Рузмикина.***

## Уяв ячĕпе

# Коллективра хисепре




*Светлана Геннадьевна Смирнова тата Юрий Константинович Гордеев Муркаш почтамтĕнче вăй хураççĕ.*

*Светлана Геннадьевна Кашмаш тăрăхĕнчи почтальонка, виççĕмĕш çул кăна ĕçлет пулин те, ĕçе тулли кăмăлпа пурнăçлать, халăхсен ыйтăвне тивĕçтерет.*

*Юрий Константинович вара çак ĕçе пуçăнни кĕçех 14 çул пулать. Вăл Шаптак тăрăхĕн почтальонĕ.*

*Ĕçре пысăк опыт пухма ĕлкĕрнĕ ĕçченсем иккĕшĕ те коллективра хисепре, ыттисемшĕн вара ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ.*

***Сăн ӳкерчĕкре: С.Г. Смирнова тата Ю.К. Гордеев.***

## Конкурс

# Хаклă парнене тивĕçнĕ

Хальхи вăхăтра ĕç сыхлавĕ çине ытларах та ытларах тимлĕх уйăраççĕ. Çакă ăнсăртран мар. Çулленех производствăра суранланние пула сахал мар çын пурнăçĕ татăлать, чылайăшĕ инвалида тухать. Çавна май ĕç сыхлавĕ енĕпе ĕçлекен специалистсен професси ăсталăхне ӳстерес, вĕсен пултарулăх енĕпе пуçарулăхне аталантарас, пурнăçлакан ĕçшĕн хавхалантарас, çак професси сумне хăпартас, кунпа пĕрлех ĕç условийĕсемпе ĕç сыхлавĕн тата ĕçлекенсен сывлăхĕн проблемисем çине общественноçа ытларах тимлĕх уйăрма шухăшлаттарас тĕллевпе Чăваш Республикин Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин коллегийĕн 2006 çулхи февралĕн 16-мĕшĕнчи 7 № йышăнăвĕпе Шупашкар хулинче кăçалхи июнĕн 29-мĕшĕнче «Ĕç сыхлавĕ енĕпе Чăваш Республикинчи 2006 çулхи чи лайăх специалист» ята çĕнсе илессишĕн республикăри иккĕмĕш финал ăмăртăвĕ иртнĕ.

Палăртмалла, кун пек ăмăрту-конкурс унччен районта та иртнĕ. Унта Александр Дмитриевич Алексеев хăйне лайăх енчен кăтартнă, районта мала тухнă. А.Д. Алексеев «Ударник» пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн ĕç сыхлавĕн инженерĕнче тăрăшать.

Республика шайĕнчи конкурсра та Александр Дмитриевич çухалса кайман, теори ыйтăвĕсем çине те лайăх хуравсем панă, практикăлла заданисене те ăнăçлă пурнăçланă. Çапла вара вăл комисси йышăнăвĕпе хаклă парнене тивĕçнĕ.

А.Д. Алексеев ку предприятире чылай вăхăт инженерта ĕçленĕ, юлашки çулсенче вара çынсен ĕçне сыхлать тата ĕç хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерет.

**А. КУЗЬМИН,**
**ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕн çумĕ.**

## Акатуй

# Ку хутĕнче налукçăсен

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче, районта çурхи уй-хир ĕçĕсене вĕçленĕ май Акатуйсем ирттересси тахçанах йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Нумаях пулмасть вара Лантăш вăрман уçланкине униформăллă çынсем йышлă пухăнчĕç. Çав кун кунта республикăри налук органĕсен историйĕнче çак тытăмра ĕçлекенсем пĕрремĕш хут хăйсен юрăпа спорт уявне пухăнчĕç. Управлени ертӳçи А. Дергачев çак уява хăйсен ĕçне пĕтĕмлетме, пултаруллисене чысласа саламлама тата юрлама-савăнма пухăннине пĕлтерчĕ.

Уяв спорт мероприятийĕсемпе пуян пулчĕ. Налукçăсен командисем мини-футболла, волейболла выляссипе вăй виçрĕç, эстафетăра ăмăртрĕç. Çĕнтерӳçĕсем парнесемсĕр юлмарĕç. Республикăри эстрада ушкăнĕсем, уйрăм паллă юрăçсем вара ташă-юрă сахал мар парнелерĕç.

Ĕçре палăрнисем Чăваш Республикин Президенчĕн Н.В. Федоровăн Тав çырăвĕсене, федерацин тĕп инспекторĕн Тав сăмахне тивĕçрĕç. Вĕсен шутĕнче Раççей Федерацийĕн Налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи улттăмĕш ИФНС ертӳçи А.А. Волков та. Вăл Чăваш Республикин Президенчĕн Н.В. Федоровăн Тав çырăвне илме пултарчĕ.

**ХАМĂР ИНФ.**

## Ырă хыпар

# Сочи – Олимп вăййисен хули

**Июлĕн 5-мĕшĕнче Гватемалăра Пĕтĕм тĕнчери олимп комитечĕн членĕсен сасăлавĕн юлашки тапхăрĕнче 2014 çулхи хĕллехи Олимп вăййисене ăçта ирттерессине палăртмалла пулнă. Тăватă сасă ытларах пухса çак тивĕçе Раççей курорт-хули Сочи тивĕçнĕ.**

Сасăлавăн иккĕмĕш турне Сочипе пĕрле Кăнтăр Корейăри Пхенчхан та тухнă. Австрири Зальцбург сасăлавăн пĕрремĕш турĕнче кĕрешӳ дистанцийĕнчен тухса ӳкнĕ.

Ĕнер Гватемалăра Мускав вăхăчĕпе ирхи пилĕк сехетре Раççей олимп комитечĕн президенчĕ Леонид Тягачев тата Пĕтĕм тĕнчери олимп комитечĕн пуçлăхĕ Жак Рогге 2014 çулхи хĕллехи Олимп вăййисене Сочире ирттересси пирки контракт çине алă пуснă.

Çав кунах РФ Президенчĕ В. Путин 2014 çулхи хĕллехи XXII Олимп вăййисене тата XI Параолимп вăййисене Сочи хулинче ирттерме хатĕрленесси пирки Указа алă пуснă.

---

**РФ Патшалăх Думин депутачĕ, «Единая Россия» фракци членĕ Павел СЕМЕНОВ:**

– Раççей пĕрремĕш хут çĕршывра хĕллехи Олимп вăййисене ирттерес чыса тивĕçрĕ. Çакă кашни çыншăн пысăк пĕлтерĕшлĕ событи пулса тăрать. Политика тĕлĕшпе те ку пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çакă вăл Раççейĕн политика вăйне, пирĕн Президентăн Владимир Путинăн авторитетне шута хуни. Пирĕн спортсменсем те тĕнче спорчĕн аталанăвне тивĕçлĕ тӳпе хываççĕ.

Çĕршыв Президенчĕ, Чăваш Республикин Президенчĕ, «Единая Россия» парти çĕршывра, республикăра спорта аталантарма, çынсен пурнăç шайне ӳстерме сахал мар ĕç туса ирттереççĕ. Çак çĕнтерӳ спорт юхăмне татах аталантарма, çамрăксене спортпа ытларах туслашма май парĕ.

## Камăн сăвăм пысăкрах?

**Районти хуçалăхсенче ĕнер кашни ĕнерен вăтамран сĕт мĕн чухлĕ суса илнине кăтартни (килогрампа)**

**Цифрăсен колонкисенче: 1. Кăçал сунă. 2. Пĕлтĕр сунă.**

| | | |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 7,1 | 9,9 |
| ООО «Волга» | 10,0 | 13,4 |
| «Восток» | 13,9 | 13,4 |
| «Герой» | 16,7 | 15,0 |
| К. Иванов яч. хис. | 12,0 | 8,3 |
| Ильич яч. хис. | 16,5 | 16,3 |
| Ленин яч. хис. | 11,0 | 16,0 |
| ООО АФ «Лидер» | 11,4 | 15,6 |
| "Оринино" | 13,7 | 10,7 |
| «Передовик» | 7,3 | 13,2 |
| «Свобода» | 14,8 | 14,7 |
| «Сеятель» | 5,1 | 9,5 |
| Суворов яч. хис. | 15,1 | 14,8 |
| ООО АФ "Рассвет" | 9,0 | 12,0 |
| «Ударник» | 15,5 | 14,8 |
| Чапаев яч. хис. | 9,5 | 11,5 |
| «Чемеево» | 8,4 | 12,2 |
| Чкалов яч. хис. | 13,3 | 12,4 |
| **Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе пĕтĕмпе** | **12,6** | **13,4** |

## Юбилей

### *Саламлатпăр*



Юратнă мăшăра, кăмăллă аттене, юлташа – Шетмĕпуç ялĕнче пурăнакан **Владимир Иванович ЯКОВЛЕВА** 50 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр.

Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕ, тăванĕсем, тус-юлташĕсем.**